Муркаш район хаçачĕ

Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

79 (7610) № ✻ Шăмат кун, 2008 çулхи октябрĕн (юпа) 18-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Октябрĕн 19-мĕшĕ – Çул-йĕр хуçалăх ĕçченĕсен кунĕ

Кăçалхи пек çул тусан...

Çул-йĕр кашни çыншăнах пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çул-йĕр тăвасси юлашки икĕ çулхи хăвăртлăхпа кайсан, пыра-киле резина атă мĕнне манса пырăпăр. Çитес çултан пуçласа çул тăвас ĕç ял урамĕсем хушшине куçмалла. Ку вăл çитес çултан пуçласа. Паян вара çул-йĕр хуçалăхĕнче ĕçлекенсем ыранхи професси уявне мĕнле çитĕнӳсемпе кĕтсе илеççĕ? Çакăн çинчен тĕплĕнрех каласа пама ыйтрăм та ĕнтĕ эпĕ район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕнчен, капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн ертӳçинчен В.Г. НИКИТИНРАН.

– Владимир Германович, мĕнле шайра пырать паян ялсем патне çул тăвас ĕç?

– Кăçалхи тĕллев пирĕн пысăк пулчĕ. Пирĕн районти 34 ял патне асфальт çул пулман пулсан, вĕсенчен 26-шĕн патне шăпах кăçал асфальт çул тума палăртрăмăр. Çав шутра пĕлтĕр вак чул сарса хăварнă çулсем те кĕреççĕ. Çав ялсенчен ытларахăшĕн патне паянхи куна çул туса пĕтертĕмĕр ĕнтĕ. Вĕсем: «Катăкуй–Турхан–Сарчак», «Çĕньял Очăкасси–Шупуç-Очăкасси», «Волга–Вăрăмой», «Волга–Вăрăмой–Елача», «Волга–Вăрăмой–Иштерек–Вускасси», «Волга–Вăрăмой–Эхветкасси», «Мăн Шашкар–Мемеккасси–Хунтăкасси–Хыркасси», «Мăн Сĕнтĕр–Ильинка–Апчар», «Волга–Мулкачкасси–Çĕньял Оринин», «Çĕньял Очăкасси–Шупуç–Очăкасси–Торинкасси», «Мăн Шашкар–Мемеккасси–Хунтăкасси–Хопкĕпер», «Сура–Елшик–Чăршă», «Волга–Гигант–Мăн Сĕнтĕр–Кĕрекаç– Анаткасси», «Волга–Гигант–Мăн Сĕнтĕр–Анаткасси–Çеçмер» çулсене асфальт çул сарса пĕтертĕмĕр. Вĕсемсĕр пуçне «Волга–Ивановка», «Автанкасси–Муркаш–Козьмодемьянск–Анаткас Хачăк–Макçикасси», «Автанкасси–Муркаш– Козьмодемьянск–Кăмăркасси», «Волга–Вăрăмой–Милютакасси», «Москакасси–Вăрманкас Хачăк» çулсене вак чул сарма ĕлкĕртĕмĕр. Çавăн пекех паян «Çĕньял Очăкасси–Шупуç–Очăкасси–Йĕрхкасси», «Муркаш–Турай–Сура–Çĕн Хресчен», «Волга–Канаш выççăлкки», «Волга–Мулкачкасси–Оринин», «Автанкасси–Муркаш–Козьмодемьянск– Хачăк сали» çула хăпартас ĕçсем пыраççĕ. «Мăн Сĕнтĕр–Тренккă–Ильинка» çула та реконструкцилеççĕ. «Автанкасси–Муркаш–Козьмодемьянск–Хачăк сали» çул çинче те ку ĕç пуçланнă. Çапла вара кăçал пĕтĕмпе 26,662 км çул туса пĕтермелле.

– Çулсене юсассипе те кăçал сахал мар ĕç туса ирттернĕ районта. Çакăн çинче чарăнсан та аванччĕ.

– Палăртса хăвармалла, кăçал республика пĕлтерĕшлĕ çулсене республика кунĕ валлиех юсаса пĕтертĕмĕр. Çав шутра «Волга–Мăн Сĕнтĕр–Шашкар пристанĕ», «Автанкасси–Муркаш–Козьмодемьянск», «Муркаш–Турай–Сура», «Сура» çулсем. Пурĕ çак 39,3 километр çула юсама 198003,725 пин тенкĕ тухса кайрĕ. Палăртса хăвармалла, çул юсанă çĕрте Чăваш Республикинчи «Чувашавтодор» патшалăх унитарлă предприяти ĕçченĕсем вăй хучĕç.

«Волгодорстрой» ĕçченĕсем Муркашра тротуар сараççĕ.

Кунсăр пуçне республика кунĕ умĕн вырăнти çулсене тепĕр 5 километр та 958 метр тăршшĕ тунă. Çĕньял Муркашри çула тунă тата Муркашри çулсене тунă тата юсанă çĕрте «Дорстрой» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн (дир. – В.А. Румянцев), «Волгодорстрой» (ген. дир. – К.К. Жарков), «Дорсервис» (дир. – С.С. Майрукаев) акционерсен уçă обществисен, Чăваш Республикинчи «Чувашавтодор» патшалăх унитарлă предприятин (ген. дир. – В.М. Осипов) строителĕсем тăрăшрĕç.

– Çулсене пăхса тăрассипе камсем тимлеççĕ тата?

– Ку енĕпе тав сăмахĕсене «ДЭП – 146» (ген. дир. – В.А. Павлов), «Волгодорстрой» (ген. дир. – К.К. Жарков), «ПМК «Водстрой» (дир. – В.Г. Ильин) акционерсен уçă обществисен, çавăн пекех ПГС чикĕллĕ яваплăхлă обществăн ĕçченĕсем тивĕçлĕ. Сăмаха вĕçленĕ май пурне те уяв ячĕпе саламласа, ӳсĕмлĕ ĕçлеме ырлăх-сывлăх сунатăп.

– Уяв ячĕпе, Владимир Германович, калаçушăн вара тавах.

Л.ПАВЛОВА калаçнă.

ÇУЛ-ЙĔР ХУÇАЛĂХĔН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ, ÇАК ĔÇĔН ВЕТЕРАНĔСЕМ!

Сире çул-йĕр хуçалăх ĕçченĕсен кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Çул-йĕр ыйтăвĕ пирĕн районта малтан татса памалли ыйтусенчен пĕри шутланать. Çĕнĕ çулсем хута кайни хăех район малалла аталаннине, халăхăн пурнăç условийĕсем лайăхланса пынине кăтартса парать. Çавăн пекех çул-йĕр çинче пулакан инкексен шутне чакарма пулăшать. Çапла майпа хăвăрăн ĕçĕрпе çул-йĕр çинчи хăрушсăрлăха çирĕплетме те пулăшатăр. Чăваш Республикин Президенчĕн Н.В.Федоровăн Чăваш Республикинчи автомобиль çулĕсене тăвассине хăвăрт вĕçлес енĕпе пурнăçламалли ĕçсем çинчен калакан Указне пурнăçа кĕртесси кăçал вĕçленет. Çапла вара районти 34 ял патне халиччен йĕркеллĕ çул пулман пулсан, малашне вĕсем патне такăр çул пулĕ. Ку ĕçе кăçал çулталăк пĕтиччен вĕçлеме палăртнă. Халĕ юлашки объектсенче çул тăвас ĕç пырать. Лăпланма вара сăлтав çук. Умра пысăк задача: çитес çултан пуçласа ялсенче çул тума пуçламалла. Çак ĕçре районта пурăнакансен хăйсен те айккинче пăхса тăрас марччĕ. Урамсене тирпей-илем кĕртесчĕ, çул тăвакансене май пур таран пулăшасчĕ.

Кăçал çул юсассипе те пысăк ĕçсем туса ирттертĕмĕр. Республика кунĕ тĕлне республика пĕлтерĕшлĕ çулсене юсаса йĕркене кĕртрĕмĕр.

Хисеплĕ ĕçченсем, сире ырми-канми ĕçшĕн тав тăватăп, малашне те çул тăвас, юсас, пăхса тăрас ĕçре ăнăçусем сунатăп. Хăвăрăн тивĕçĕре яланах чун-чĕре хушнă пек пурнăçласса шанатăп.

Çирĕп сывлăхлă, телейлĕ пулăр. Ĕçĕрсем ăнса пыччăр, палăртнă тĕллевсем пурнăçланса пыччăр.

Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.

Халăх тата влаç: тĕллевсем пĕр пек

Ыйтусене пĕрле татса панине мĕн çиттĕр?..

Тĕрлĕрен ыйтусемпе килеççĕ çынсем район администрацине. Хăшĕсем хăйсене хумхантаракан ыйтусене çырусенче палăртаççĕ. Мĕнлерех ĕçлесе пыраççĕ-ха район администрацийĕнче граждансен ыйтăвĕсемпе? Район администрацийĕн ĕçĕсене йĕркелесе пыракан А.В. КРАСНОВ сире халĕ шăпах çакăнпа паллаштарать:

– Кăçалхи виççĕмĕш кварталта кăна çакнашкал 23 тĕслĕх пулчĕ. Иртнĕ çул ку вăхăтра 12 çыру килнĕччĕ. Вĕсене татса парассипе район администрацийĕн пайĕсем тимлерĕç. Граждансем хускатнă ыйтусене татса парассине пĕрре те куçран вĕçертместпĕр.

– Районта пурăнакансене паян ытларах мĕн хумхантарать?

Граждансем хускатакан ыйтусенчен ытларахăшĕ (30,4 проценчĕ) общество пурнăçĕпе çыхăннă. Апла пулсан районта пурăнакансене хамăр тăрăхра пулса иртекен ĕçсем, çĕнĕлĕхсем кăсăклантармаççĕ мар. Вĕсене пĕр-пĕр автосервис объектне меллех мар вырнаçтарнă тĕслĕхсем те канăç памаççĕ. Саккуна пăсса хăйсем тĕллĕн çĕрсемпе усă курнă тĕслĕхсене те вĕсем курмăш пулмаççĕ. Икĕ граждана акă сотовăй çыхăну станцийĕсен вышкисене вырнаçтарни пăшăрхантарать.

Çыру авторĕсен тепĕр пайĕ (21,7 процент) çул тăвас ыйтăва çĕклет. Тĕслĕхрен, вăл е ку ял патне хăçан асфальт çул тăваççĕ е «пирĕн ялта хăçан йĕркеллĕ çул пулать» тата ытти те. Кăçалхи 9 уйăхра çакнашкал ыйтусемпе коллективпа çырнă çырусем 23 пулчĕç. Çакă савăнтарать. Çыру авторĕсем вăл е ку ыйтăва татса парасса ним тумасăр кĕтсе лармаççĕ. Вĕсем çулсене тăвассин проектпа смета документацийĕсене хатĕрлес, эффективлă маршрут суйласа илес ĕçе хутшăнаççĕ. Ялсен урамĕсене тирпейлеççĕ.

Çакна та палăртса хăвармалла, 3 кварталта коммуналлă тата йăла ыйтăвĕсене те хускатрĕç района пурăнакансем. Кун пекки 5 тĕслĕх (килнĕ ыйтусен 21,7 проценчĕ) пулчĕ. Иртнĕ çул кун пек ыйтусем килменччĕ çак вăхăтра. Тĕпрен илсен, асăннă ыйтусем çуртсене хăйсем уйрăммăн хутса ăшăтас система çине куçассипе, çуртсен тăррисене юсассипе, çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшусемшĕн тӳлес йĕркепе, шывпа тивĕçтерессине çĕнĕрен йĕркелесе ярассине, çӳп-çап илсе тухассине йĕркелессипе çыхăннăскерсем. Çурт-йĕр ыйтăвĕсем пурĕ 3 пулчĕç е пĕтĕм килнĕ ыйтусен 13 проценчĕ чухлĕ.

(Вĕçĕ 5-мĕш стр.).

Информаци кунĕнчен

Тĕл пулу усăллă иртрĕ

Иртнĕ юн кун йăлана кĕнĕ тăрăх республикăра Пĕрлехи информаци кунĕ пулса иртрĕ. Çавна май пирĕн района Чăваш Республикин вĕрентӳ, çамрăксен политикин министрĕ Г.П. Чернова, Чăваш Республикин культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политики тата архив ĕçĕсен министрĕн пĕрремĕш çумĕ В.С. Бондарев, Патшалăх статистика службин Чăваш Республикинчи территорири органĕн ертӳçи Ю.К. Марков, Чăваш Республикин шалти ĕçсен министрĕн çумĕ В.М. Толстов килчĕç. Чи малтанах вĕсем район пуçлăхĕпе Ю.А. Ивановпа тĕл пулчĕç. Юрий Александрович вĕсене районăн кăçалхи 9 уйăхри социаллă-экономика аталанăвĕпе паллаштарчĕ, чи малтан татса памалли задачăсем çинче чарăнчĕ.

Унтан информаци ушкăнĕ район центрĕнчи физкультурăпа спорт комплексĕнче пулса курчĕ. Комплекс ертӳçи А.Н. Куликов калаçă тăрăх, нумайччен кĕтнĕ комплекс пĕрре те пушă тăмасть. Спортзалта çамрăксем волейболла, баскетболла выляççĕ. Тренажер залĕнче харăс 20 çын сывлăхшăн усăллă ирттерме пултарать вăхăта. Боксерсен залĕнче каçхи 6 сехеттен боксла кĕрешеççĕ пулсан, 18 сехет хыççăн кунта фитнес-клуб хăйĕн ĕçне пуçăнать. Бассейнран вара çын татăлмасть. Ачасем физкультура урокне ишме килеççĕ. Уроксем хыççăн вара аслăраххисем хăйсем тĕллĕнех, кĕçĕннисем ашшĕ-амăшĕсемпе килеççĕ.

Иккĕмĕш хутра вырнаçнă Муркашри искусство шкулĕнче те килĕшрĕ информаци ушкăнне. Кашни класра пулчĕç вĕсем.

– Аслисемпе йĕркелеме шутламан-и ку кружока? – терĕ Галина Петровна ачасем тăмран ăсталанă кĕлеткесемпе паллашнă май.– Чикĕ леш енче çитĕннисем хушшинче анлă сарăлнă ку ĕç.

Комплексăн чӳречинчен унăн хыçалти енчи хăт кĕртнĕ вырăна тинкерчĕ.

– Сирĕн кунта Шупашкарти пекех, – тĕлĕннине пытараймарĕ министр кунта чупмалли, волейболла вылямалли тата кану вырăнĕсем, çавăн пекех хĕлле каток пулассине пĕлсен.

Кăмăллă пулчĕç хăнасем мĕн курнипе. Унтан 4 ушкăна пайланса район администрацийĕн яваплă ĕçченĕсемпе пĕрле ял тăрăхĕсене çитсе курчĕç, ĕç коллективĕсемпе тĕл пулчĕç.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

Ларуран

Пĕлтерĕшлĕ ыйтусене сӳтсе явнă

Депутатсен районти Пухăвĕн председателĕн йышăнăвĕпе депутатсен районти Пухăвĕн черетлĕ 28-мĕш ларăвĕ 2008 çулхи октябрĕн 17-мĕшĕнче иртнĕ. Кун йĕркине пăхса тухма çак ыйтусене кĕртнĕ:

1. Муркаш районĕн бюджетне 2008 çулхи 9 уйăхра мĕнле пурнăçлани çинчен.

2. Депутатсен Муркаш район Пухăвĕн 2007 çулхи ноябрĕн 30-мĕшĕнчи С-22/3 № «Муркаш районĕн 2008 çулхи бюджечĕ çинчен» йышăнăвне улшăнусемпе хушусем кĕртесси çинчен.

3. Депутатсен Муркаш район Пухăвĕн 2007 çулхи октябрĕн 25-мĕшĕнчи С-21/7 № «Чăваш Республикинчи Муркаш районĕнче бюджет хутшăнăвĕсене йĕркелесе пырасси çинчен» положенине çирĕплетесси çинчен» йышăнăвне улшăнусемпе хушусем кĕртесси çинчен.

4. Муркаш районĕн харпăрлăхĕнче шутланакан шыв объекчĕсемпе усă курнăшăн укçа тӳлессин, унăн виçисен йĕркине çирĕплетессин йĕрки çинчен.

5. Муркаш районĕн территорийĕнче вырнаçнă тата харпăр хăй тĕллевĕпе пурте усă куракан шыв объекчĕсемпе усă курмалли правилăсене çирĕплетесси çинчен.

6. Муркаш районĕн территорийĕнчи вырăнти пĕлтерĕшлĕ уйрăмах упракан çĕрсен шутне палăртмалли йĕрке пирки калакан положение çирĕплетесси çинчен.

7. Муркаш район администрацийĕнче муниципаллă службăн вакантлă должноçĕн ертӳçин тивĕçне пурнăçлама конкурс ирттерессин положенине çирĕплетесси çинчен.

8. Район территорийĕнче строительствăпа çыхăнман тĕллевпе çĕр уйăрса парасси пирки калакан положение улшăнусем кĕртесси çинчен.

9. Депутатсен районти Пухăвĕн 2008 çулхи февралĕн 15-мĕшĕнчи С–24/3 № «Муркаш районĕнчи муниципаллă харпăрлăха приватизацилессин 2008 çулхи прогноз планĕ çинчен» йышăнăвне улшăнусем кĕртесси çинчен.

10. Наградăлама тăратасси çинчен.

Асăннă ыйтусемпе район администрацийĕн финанс пайĕн пуçлăхĕ Р.И. Ананьева, организациле кадр тата вырăнти самоуправлени органĕсемпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕн çумĕ И.В. Волкова, пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен пайĕн пуçлăхĕ А.В. Петров тухса калаçнă.

Сӳтсе явнă ыйтусемпе депутатсем тивĕçлĕ йышăнусем тунă.

Юбилей

Саламлатпăр



Юратнă мăшăра, аттене, асаттене – Сосновка ялĕнче пурăнакан **Валерий Филиппович СЕМЕНОВА** сумлă юбилей – 60 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр, мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Вăрăм кун-çул, тулли телей, çирĕп сывлăх пултăр. Эс пурришĕн савăнатпăр, санпа хамăра телейлĕ туятпăр. Тайма пуç сана пуриншĕн те.

Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, 3 ывăлĕ, 2 кинĕ, 6 мăнукĕ, çывăх тăванĕсем, тăхлачипе хăтисем.

Юратнă та хаклă çыннăмăра – Муркаш районĕнчи Çатракасси ялĕнчи **Михаил Николаевич КИРПИЧНИКОВА** 60 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр.

Аттемĕр! Сывлăху çирĕп, ĕмĕрӳ вăрăм, телейӳ пысăк пултăр, кĕрекӳ çăкăр-тăвартан ан татăлтăр.

Тав тăватпăр сана чĕререн,
Тайма пуçăм сана пирĕнтен,
Ăшшуна паратăн-çке чунран,
Эсĕ хаклă пире ылтăнран.

Саламлатăпăр сана мăшăрĕ, хĕрĕсем, кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем.